STEREO R30 02149

## СТЕПАН МАКСИМОВ (1892—1951)

Хор валли çырнă произведенисем
Илемлетнĕ чăваш халăх юррисем

**1-мĕш енĕ**

**Алран кайми аки-сухи** — 3.49

**Пахчи, пахчи** — 1.47

**Вĕç, вĕç, куккук** — 3.14

**Çич çырма** — 1.45

**Атьăр, хĕрсем, выляма** — 3.10

**Шăнкăр кăна** — 2.16

**Çăпата** — 2.09
(кĕвви С. Максимовăн, сăвви А. Отачкинăн)

**Ямпах урам** — 1.49

**2-мĕш енĕ**

**Ан авăн, шĕшкĕ** — 1.27

**Каçмисене хываççĕ** — 2.44

**Туй** — 2.14

**Уй варринче** — 3.13

**Шăпăр кĕвви** — 2.30

**Уяв юрри** — 2.15

**Лутраях та шĕшкĕ** — 1.21

**Шанчăк** — 4.09
(кĕвви С. Максимовăн, сăвви М. Аттайăн)

Чăвашла

Чăваш АССР телевиденипе радиовещани
Государство комитечĕн хорĕ
Художество руководителĕ тата дирижерĕ
Морис Яклашкин
Геннадий Никифоров (1) юрлать
Баянпа Михаил Михайлов (7) вылять

С. М. Максимов (1892—1951) пултарулăх çулĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пуçланнă: 1907—1911 çулсенче вăл кунта вĕреннĕ, ун хыççăн 1925-мĕш çулччenех çак шкулта музыкăна вĕрентнĕ. Вăл кунтах чăваш халăх музыкине лайăх пĕлекен фольклорист тата нацин профессилле искусствин чи малтанхи ĕçченĕсенчен пĕри — композитор пулма ĕлкĕрет. Каярахпа вăл чăвашсенчен чи малтан Мускаври консерваторие пĕтерет (Р. М. Глиэрпа А. Н. Александров класĕсенче вĕренет, 1930—1935 ç.ç).

С. М. Максимов çавăн пекех музыка енĕпе пĕлӳ парас ĕçе аталантарма нумай тимлет, вăл тăрăшнипе Шупашкарта музыка техникумĕ уçнă (1929 ç.)

Максимовăн нумай енлĕ ĕçĕ-хĕлĕнче композитор пултарулăхĕ пысăк вырăн йышăнать. Вăл хресчен фольклорĕн авалхи пуянлăхĕпе усă курма кăмăллать. Пластинка ĕлĕкхи-йăлайĕркепе çыхăннă, халăх хушшине анлă сарăлнă «Алран кайми аки-сухи» ятлă илемлетнĕ кĕреке юррипе пуçланать. Шухăшлав еккипе хывнă çак юрра хăшпĕр чухне «Чăваш халăхĕн гимнĕ» тесе пахалаççĕ. Пурнăçа философла хаклани, ăна çутçанталăк ӳкерчĕкĕсемпе танлаштарни хор валли çырнă ытти хайлавсенче те тĕл пулать («Вĕç, вĕç, куккук», «Атьăр, хĕрсем, выляма»). Илемлетсе çырнă чухне композитор юрăсен куплетлă тытăмне, вĕсен пысăк пĕлтерĕшлĕ ансатлăхĕпе кăмăл-сипет тасалăхне упраса хăварать. «Уй варринче» ятлă рекрут юрри те хăйĕн тарăн шухăшĕпе палăрса тăрать.

Çĕнĕ саманан уçăмлă та хастарлă марш кĕввисем С. М. Максимовăн çамрăксем валли çырнă шӳтлĕ те хаваслă юррисенче уйрăмах лайăх сисĕнеççĕ (сăмахран: «Пахчи-пахчи», «Ан авăн, шĕшкĕ», «Уяв юрри», «Туй», «Çич çырма»). «Ямпах урам» ташă юрри, «Лутраях та шĕшкĕ», «Шăнкăр кăна» хăна юррисем хăйсен шухăшĕпе тата çĕкленӳллĕ те хĕрӳллĕ ритмĕпе малтан асăннă юрăсен ушкăнне çывăх тăраççĕ. С. М. Максимов хор валли «Каçмисене хываççĕ» ĕç юррине те илемлетнĕ. Пластинка çине композитор хăй хывнă хайлавне «Çăпата» юрра та çырса илнĕ, вăл кунти инструментсемпе калама çырнă пĕртен-пĕр хайлав. Ку тĕслĕхре Совет влаçĕн çулĕсенче халăх пурнăçĕнче пулса иртнĕ социалла улшăнусене ӳкерсе панă.

С. М. Максимов кунçулĕнче вăл сăлтавсăрах репрессиленĕ тапхăр та пур (1937—1947 ç.ç.) Унăн юррисене 1955 ç. композитора тӳрре кăларичченн юрлаттарма чарнă пулнă.

Степан Максимов хайлавĕсене Чăваш АССР патшалăхĕн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен премийĕн лауреачĕ телевиденипе радиовещанин Чăваш АССР патшалăх комитечĕн хорĕ юрлать. Коллектива 1986 çултанпа Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ искусство ĕçченĕ Морис Яклашкин ертсе пырать (Горькири М. И. Глинка ячĕпе хисепленекен патшалăх консерваторине пĕтернĕ). Хор республикăри музыка пурнăçĕнче малти вырăнсенчен пĕрне йышăнса тăрать, вăл чăваш халăхĕн хорпа юрă искусствин хастарлă пропагандисчĕ шутланать. Вăл çирĕм çул ытла ĕçлет ĕнтĕ, çак тапхăрта пуян репертуар хатĕрленĕ, çав шута тĕрлĕ формăпа жанр хайлавĕсем — юрăсенчен тытăнса поэмăсем, ораторисемпе кантатăсем таранах сакăрçĕр ытла кĕреççĕ. Вĕсенчен икçĕрĕшне яхăн пĕтĕм Союзри фонд валли çырса илнĕ. 1989 çулта хор Тĕп телевиденипе Пĕтĕм Союзри радион симфонипе эстрада музыкин оркестрĕ каланипе юрланине çырса хунă, çĕршыври телекуравçăсене хорăн виçĕ концерт программине кăтартнă. Коллектив РСФСР композиторĕсен Союзĕн пленумĕсемпе сьезчĕсем вăхăтĕнче Мускавра, Горькире тата Хусанта темиçе хут та юрланă, Чăваш литературин, музыкипе искусствин Белоруссире Дагестанта, Мордва, Мари, Тутар АССРĕсенче, Горький облаçĕнче ирттернĕ кунсене хутшăннă. Хор яла культура енĕпе шефа илес ĕçе хастарлă туса пырать, вăл СССР Культура министерствин тата культура ĕçченĕсен профсоюзĕн Тĕп комитечĕн Дипломне илме тивĕç пулнă.

Хор Чăваш искусствине Венгри Халăх Республикинче те ăнăçлă кăтартнă. Юлашки çулсенче хорти артистсен профессилле ăсталăхĕ ӳссе пыни сисĕнет. Пултарулăх шыравĕ коллектива классика хайлавĕсене юрлас тĕлĕшĕпе лайăх ĕçлеме хăнăхтарчĕ, çакă унăн паян илемлĕх туртăмне палăртса пырать.

Т. Смелова.

Начало творческого пути С.М. Максимова (1892 — 1951) связано с Симбирской чувашской учительской школой, где он учился в 1907 — 1911 гг. и затем преподавал до 1925 г. Здесь он сформировался как фольклорист, выдающийся знаток чувашской народной музыки и композитор, один из первых деятелей национального профессионального искусства. Позднее он первым из них окончил Московскую консерваторию (в классах Р.М. Глиэра и А.Н. Александрова, 1930 — 1935 гг.). Большое внимание уделял С.М. Максимов также развитию музыкального образования, его усилиями в Чебоксарах был открыт Музыкальный техникум (1929 г.).

Композиторское творчество занимало важное место в многогранной деятельности Максимова. Он предпочитал обращаться к старинным пластам крестьянского фольклора. Пластинка открывается знаменитой обработкой застольной обрядовой песни «Гимн землепашцу». Это песня-раздумье, которую иногда называют чувашским народным гимном. Философское осмысление жизни и сопоставление ее с картинами природы содержится и в последующих хорах «Лети, лети, кукушка», «Пойдем, девушки, в хоровод». В своих обработках композитор сохраняет куплетную структуру песен, их мудрую простоту и высокую этичность. Значительной глубиной содержания отличается также рекрутская песня «Посреди поля».

Четкие, энергичные маршевые ритмы присутствуют в хорах С.М. Максимова в основном в жанрах молодежной и шуточной игровой песни. Таковы «В саду, в саду», «Не гнись, орешник», «Праздничная», «Свадьба», «Через семь оврагов». Близко примыкают к этой группе песни по содержанию и настроению бодрые, зажигательные: плясовая «Улица Ямбах», гостевые «Низенький орешник», «Течет ручей, журчит». Нашла воплощение в хоровом творчестве С.М. Максимова и тема труда в обработке трудовой песни «Мостки кладут». На пластинке представлено также оригинальное сочинение композитора (единственное здесь с инструментальным сопровождением) — песня «Лапти», в которой отражена тема социальных преобразований в первые годы Советской власти. В биографии С.М. Максимова был период, когда он подвергся репрессиям (1937 — 1947), произведения его не исполнялись вплоть до реабилитации в 1955 г.

Произведения Степана Максимова звучат в исполнении лауреата Государственной премии Чувашии им. К.В. Иванова хора Государственного комитета Чувашии по телевидению и радиовещанию. С 1986 г. художественный руководитель и главный дирижер хора — выпускник Горьковской государственной консерватории им. М.И. Глинки (класс А.А. Лебединского), заслуженный деятель искусств Чувашии Морис Яклашкин. Хор занимает одно из ведущих мест в музыкальной жизни республики, является активным пропагандистом чувашского национального хорового и песенного искусства. Более чем за два десятилетия непрерывной творческой деятельности им накоплен огромный репертуар — свыше восьмисот произведений разных форм и жанров — от песен до поэм, ораторий и кантат. Около двухсот из них записано в фонд всесоюзного вещания. В 1988 г. осуществлена запись хора в сопровождении оркестра симфонической и эстрадной музыки ЦТ и ВР, всесоюзному зрителю показаны три концертные программы с участием хора. Неоднократно коллектив выступал на пленумах и съездах композиторов Российской Федерации в Москве, Горьком, Казани, участвовал в Днях чувашской музыки и литературы в Белоруссии, Дагестане, Мордовии, Татарии, Горьковской области. С большим энтузиазмом хор ведет культурно-шефскую работу на селе, награжден Дипломом Министерства культуры СССР и ЦК профсоюза работников культуры. На традиционных фестивалях музыки композиторов автономных республик Поволжья и Приуралья хор с неизменным успехом исполняет не только произведения чувашских композиторов, но и произведения братских республик.

В 1988 году коллектив впервые принял участие в международном фестивале музыки в Венгерской Народной Республике, где был удостоен звания Дипломанта фестиваля. В последние годы отмечается заметный рост профессионального мастерства и исполнительской культуры артистов хора. Творческий поиск привел коллектив к серьезной работе над классическими произведениями, и этот процесс сегодня приобретает характер художественного направления.

Т. Смелова

## СТЕПАН МАКСИМОВ (1892 — 1951)

Хоровые произведения
Обработки народных песен

**Сторона 1**

**Гимн землепашцу** — 3.49

**В саду, в саду** — 1.47

**Лети, лети, кукушка** — 3.14

**Через семь оврагов** — 1.45

**Пойдем, девушки, в хоровод** — 3.10

**Течет ручей, журчит** — 2.16

**Лапти** (музыка С. Максимова, слова А. Отачкина) — 2.09

**Улица Ямбах** — 1.49

**Сторона 2**

**Не гнись, орешник** — 1.27

**Мостки кладут** — 2.44

**Свадьба** — 2.14

**Посреди поля** — 3.13

**Песня пузыриста** — 2.30

**Хороводная** — 2.15

**Низенький орешник** — 1.21

**О новой жизни** (музыка С. Максимова, слова М. Аттая) — 4.09

На чувашском языке

Хор Государственного комитета Чувашской АССР
по телевидению и радиовещанию
Художественный руководитель и дирижер
Морис Яклашкин
Геннадий Никифоров, пение (1)
Михаил Михайлов, баян (7)

Звукорежиссер Г. Цес
Редакторы В. Насонов, К. Симонян
Художник В. Панкевич

© А/О «РУССКИЙ ДИСК», 1993

Изготовлено в СП «Апрелевка – Саунд Инк».
Заказ 384. Тираж 15000